Анне пурри – пуриншĕн те телей

(вĕренӳ организацийĕсенче ирттермелли уяв сценарийĕ)

Уяв тĕллевĕсем: аннене юратма, упрама вĕрентесси; чăваш юрри-сăввипе килентересси, ачасен пултарулăхне тĕрлĕ енлĕ аталантарасси.

Курăмлăх хатĕрĕсем: «Анне – пирĕн чĕрере», «Пирĕн анне» темăсемпе хатĕрленĕ ӳкерчĕк куравĕсем, тĕрлĕ хутсенчен ăсталанă илемлĕ чечексем.

Ĕç хатĕрĕсем: тĕрлĕ тĕслĕ чечексем: хĕрлĕ, сарă, кĕрен, ӳкерчĕксем тата шарсем.

Уяв юхăмĕ

Залра илемлĕ юрă-кĕвĕ янăрать. Вĕренекенсем, куракансем тата килнĕ хăнасем вырнаçса лараççĕ.

Ертӳçĕ. Ырă кун пултăр, ачасем, хисеплĕ хăнасем! Пурне те сывлăх сунатпăр!

1 ача:

Ылтăн мар-ши эс, анне?

Кĕмĕл мар-ши эс, анне?

Ылтăн пек, ай, хаклă-çке,

Кĕмĕл пек, ай, сумлă-çке.

2 ача:

Çăлтăр мар-ши эс, анне?

Уйăх мар-ши эс, анне?

Çăлтăр пек хĕлхемлĕ-çке,

Уйăх пек илемлĕ-çке.

3 ача:

Шăпчăк мар-ши эс, анне?

Е саркайăк эс, анне?

Çут хĕвел, чечек, ахах –

Ырлама çитмест сăмах.

4 ача:

Тӳпере пиншер çут çăлтăр
Çуталать-çке йăлтăр-йăлтăр.
Кам-ши çутнă вĕсене?
Ма ӳкмеççĕ çĕр çине?
Вĕсене пĕрле пухасчĕ,

Çăлтăрсен çыххи тăвасчĕ,
Ман юратнă аннене,
Парнелесчĕ çыххине.

Ертӳçĕ. Раççейре Амăшĕсен кунне чӳк уйăхĕн юлашки вырсарни кунĕнче палăртаççĕ. Амăшĕсен кунĕ — çулталăкри чи çутă та таса уявсенчен пĕри. Анне — кашни çыншăн пурнăçра чи хаклă çын. Кашни ача хăйĕн амăшне юратнине пĕлтерес тесе ăна савăнтарма, ырă ĕçсем тума тăрăшать.

4 ача:

Анне! Пурнăç гимнĕ евĕр эсĕ

Янра мĕн ĕмĕре, чыспа çутал.

Сана – тивлетлĕ инçетсем чĕнеççĕ,

Сана – кун-çул сунать телей, вăй-хал.

Ертӳçĕ. Заливăн сулахай енчи сăрчĕ çинче мăнаçлă палăк пур. Вăл аннесен палăкĕ – «Анне-Пирĕшти». Ăна бронзăран тунă. Палăк питĕ çӳллĕ. Вăл чăваш хĕрарăмне сăнарлать. «Килĕшӳпе юратура пурăнакан ачамсем пиллĕхлĕ», – тесе çырнă ун çине. «Анне-Пирĕшти» пире пурне те туслăн пурăнма сĕнет, пехил парать.

Туссем! Пирĕн çак пехиле çухатас марччĕ, упраса пурăнасчĕ. Çапла пултăр!

Вĕренекенсем пурте пĕрле. Çапла пултăр!

Ертӳçĕ. «Анне! Çак ят чи çывăх, чи чаплă çĕр çинче.

Чăнах та, кам-ха манĕ тăван амăшне? Никам та мар, вăл пире ачашласа ӳстерет, ăс парать.

5 ача

Анне чĕри – вăл чи ăшши!
Анне алли – вăл чи çемçи!
Анне кулли – чи шанчăкли!
Анне пурри – чи телейли!

Ертӳçĕ   Мĕнле илемлĕ те çепĕç сăмахсем! Чăнах та, анне пурри – пуриншĕн те телей.

6 ача:

Юрăçсем юратса юрлаççĕ

Ытарма çук анне çинчен.

Сăвăçсем ăмăртса мухтаççĕ

Унăн ыр кăмăлне куллен.

7 ача:

Кайăксем йăвинчен пит варлăн

Ăсатаççĕ чĕпписене.

Çавăн пек пире те кăлараççĕ

Аннесем аслă çул çине.

«Чăх чĕппи» юрă

Ертӳçĕ.

Тусăмсем! Ак мĕн сире калатăп

Аннĕре ан манăр нихăçан.

Юратма та упрама ыйтатăп

Пурнăç лайăх аннесем пулсан.

Ертӳçĕ. Аннесем çинчен ваттисен самахĕсем те пур, вĕсене аса илер-ха, ачасе. Ваттисем вĕрентсе каланисене лайăх пĕлетĕр-и эсир?

1 ача: Аçу-аннӳне хисеплемесен хăвна йывăр килĕ.

2 ача: Амăшне вĕрекен анчăк кашкăр кулли пулнă тет.

3 ача: Амăшĕ йӳçĕ çисен те ачисем пылак çинĕ.

4 ача: Атте-анне пиллени Турă çырнипе тан.

5 ача: Амăш куçĕ умĕнче пур ачи те чечек пек.

Ертӳçĕ. Паянхи уявăн символĕ – кăвакарчăн куçĕ чечек. Эсир, ачасем, тĕрлĕ тĕслĕ хутсенчен пурте пĕрле кăвакарчăн куçĕ чечекне ăсталарăр, Илемлĕ чечек хатĕр те.

Ачасем, хаклă хăнасем! Çак чечекпе пĕрле сире ырă та вăрăм кун-çул сунатпăр. Аннесене, ачасем, юратăр, пулăшăр, хисеплĕр.

Пурте пĕр харăс. Тепре тĕл пуличчен! Сывă пулăр!